24-30
К-91

*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем пĕрлешĕр.*

К-3

Ал. Краснов

# Т̧ЕТ̧Т̧Е Т̧ИРĔ

Ҫăваш Оплăҫĕнҫи Сывлăх пайĕ кăларнă

Ҫăваш Кĕнеки Уйрăмĕн Типокрафийĕ
Шупашкар
1924 ç.

Областлит № 315. Напеч. 3.000

г. Чебоксары, Типография Чувашиздата.

# Умĕнхи сăмах.

Çак ҫеҫҫе кĕнекине сырнă ҫухне, ăна çыраканĕ ҫеҫҫерен касакансем валли тесе çырман, кастарма кирлине ҫухлаймап йалти ҫăваш халăхне мĕншĕн кастарма кирлине тĕплĕрех пĕлтерес тесе çырнă. Çыраканĕ çак кĕнекере ҫеҫҫе синҫен вырăсла çырнă кĕнекесенҫен кăштах илнĕ. Вăл кĕнекесем: *Гамбурцев*—Оспопрививание—для студентов и акушерок, *Флеров*—Оспа и оспопрививание.

Кĕнекере хăш ҫыхвăрсене Халăх Сывлăх Кăмиссариаҫĕн ҫĕрлĕ картокрамăран кăштах ӳкерсе çырнă.

Çыракан, çак кĕнеке тăрăшса ĕçлесе пурăнакан, йе ҫухăн ҫăваш халăхне тĕплех ăнлантараҭ тесе каламасҭ. Кĕнекен кăлтăкĕсене, çитейменнине куракансене тивĕçлĕ кăтартма ыйтаҭ. Уншăн çав çынсене вăл хăй тавтăваҭ.

*Çыракан.*

# ҪЕҪҪЕ.

## Ăҫтан килсе ҫакланнă пирĕн хушăмăра ҫеҫҫе.

Ҫеҫҫе тĕнҫери халăхсем хушшинҫе авалтанпах пулнă. Ун ҫинҫен ҫыракансем кăтартнипе малтанах вăл Аҫире: Киттайра (Христ. ҫур.) 1120 ҫул малтан, Интире тахҫан малтанах пулнă. Ҫеҫҫене ҫĕр ҫинҫе малтанах ăҫта пуҫланнине нимĕнле историксем те пĕлтермесҫĕ. Интирен ҫеҫҫĕ урăх вырăнсене те сарăлнă. Емĕре ҫĕнĕ шутпа шутлама пуҫласан 4-мĕш ĕмĕрте ҫеҫҫе Интостан ҫиккинҫен куҫҫа пĕтĕм хĕвелтухăҫ йенне сарăлма пуҫланă. 6-мĕш ĕмĕрте ҫеҫҫе ҫирĕ Вăтам ҫĕртри (Средиземное море) тинĕс хĕрринҫе те куранна. 7-мĕш ĕмĕрте йекипĕта арапсем пырса хăйсемпе пĕрле унта ҫав ҫеҫҫе ҫирне йертсе пынă. Ҫав ҫеҫҫех унтан Вăтам ҫĕртри тинĕс ҫинҫи Ҫитсили йатлă тинĕс утти-

не тата Иттали, Испани, Франтси ҫӗрӗсене те саралнӑ.

Ҫынран ҫынна ҫеҫҫе ҫасах куҫат. Ҫапла куҫса вӑл ӗлӗк Александтӑр Маккетонски ҫапӑҫнӑ вӑхӑтра унӑн ҫарӗсем урлӑ, тӗрлӗ халӑхсем хушшине хӑвӑртах саралнӑ. Ҫавӑн пек малалла ҫеҫҫене тӗрлӗ вӑрӑна саралма каттоликсен тӗнӗ йӗркине сарасшӑн кӑларнӑ «Крестовые походы» тейекен вӑрҫӑсем те ҫылай пулӑшнӑ. Ҫак ҫапӑҫу майӗпе вара ҫав ҫеҫҫе Раҫҫейпе Финнӑ ҫиккипе тата Исландирен пуҫне пӗтӗм Йевроппа саралнӑ.

Ҫеҫҫе Аҫире пур вырӑна ҫыпӑҫнӑ пекех саралнӑ. Африкра ҫеҫҫе йермен вырӑн «Добрая надежда» тейекен мыс ҫинҫе ҫеҫ йулнӑ. 16-мӗш ӗмӗрте ҫеҫҫе, Америке пыракансем йертнипе, унти ҫынсене ҫапӑҫу вӑхӑтӗнҫе испантсӑсем пӗтернинҫен те ытла пӗтернӗ. Кайран 17-мӗш ӗмӗрте ҫеҫҫе Исландийе Раҫҫейре те курӑннӑ. Ҫеҫҫе йаҫӗ Раҫҫейре ҫи малтан ҫав ӗмӗрте 1653-мӗш ҫулта илтӗнет.

Ҫеҫҫе—йерекен ҫир. Йерекен ҫирсем пур те ҫынсем ҫинҫе хӑвӑрт йып-

лӑланса ӗрҫекен. куҫа курӑнми, вак хурт пеккисенҫен (вӗткӗнсенҫен) пулса тӑраҫҫӗ.

**Тӗрлӗ ҫирсен хурткӑпшанкӑсем (микропӗсем).**

Тӗрлӗ ҫирсен куҫа курӑнми вак хурткӑпшанкӑсене вырӑсла бациллы йе микробы, теҫҫӗ. Ҫак микропсене куҫа ахалҫ курӑнманнине пысӑклатакан трупапа (микроскопа) ҫеҫ кураҫҫӗ. Микроскопа тӗрлӗ ҫирӗн микропӗсене ҫылайӗшне, вӗсен мӗнле хурткӑпшанкине те пӗлеҫҫӗ. Вӗсем хӑш ҫирӗн патак йевӗрлӗ (ҫахуткӑ ҫирӗн). Ӑна Кох хушаматлӑ тухтӑр микроскопа пӑхса пӗлнӗ. Ҫавӑнпа ӑна халӗ вӗренӳре Кохӑн патакӗсем, теҫҫӗ. Тата тиф ҫирсен хурткӑпшанкӑ (вӗткенӗсем) урӑх майлӑ. Халер ҫирӗн хурткӑпшанки хӳреллӗ пӑнҫӑ йевӗрлӗ.

Сифилис (намӑс) ҫирӗн микропне спирохет, ыйхӑ ҫирӗн микропне спириллӑ, теҫҫӗ.

Тата урӑх тӗрлӗ ҫирӗн тӗрлӗ йатлӑ, тӗрлӗ йевӗрлӗ, куҫа курӑнми хурткӑпшанкӑсем.

Скарлатгинăн (пыр ҫирĕ), корĕн, хĕрлĕ шатран тата урăхла йерекен ҫирсем пур те хăй йеверлĕ хăрушă ҫирсем.

Ҫак ҫирсен хушшинҫи хăшхăш ҫир мĕнле хурткăпшанкăран (микропсенҫен) пулнине халĕ ҫапах та пурне тупайман. Ҫавăн пек куҫ ҫирĕнне те тупайман. Ҫынран ҫынна ҫас сарăлакан ҫирсем пур те куҫа курăнми вĕтĕ йапаласенҫен пулса тăпине халĕ вĕрентӳ кăтартнипе пур тухтăрсем те пĕлеҫҫĕ. Ҫавăн пек ҫеҫепе ҫынна мĕнле хурткăпшанкă ҫирлеттернине те халĕ пĕлеймеҫҫĕха. Ҫеҫепе ҫирлессинҫен мĕнле хăтăлмаллине пĕлеҫҫĕ. Вăл пĕлӳ тĕплĕ кăтартнипе ҫеҫҫерен хăтăлма пурин те аҫаран пуҫласа ватти ҫамрăкĕпех хăйсене ҫеҫҫерен хул кастармалла.

## Ҫеҫҫерен хăтăлас тесе ĕлĕк мĕнле кĕрешнĕ?

Ҫеҫҫерен кастарни, вăл ҫын ҫумне унăн ҫийелти тирĕ айне ҫеҫҫе пӳрне ҫăмăклăн сыпăҫтарни пулаť. Ҫавăнпа ĕлĕл ҫынсем ҫеҫҫерен хăтăлас тесе, ҫеҫҫе пӳрне ҫирлĕ ҫынсенҫен илсе сывă ҫынсем

çине вĕсен çийелти ӳђĕтирĕ айне çăмăллăн çийелтен касса, йе йĕп таврашĕпе кӳртсе сывă çынсене çав ђирпе ђирлеттернĕ.

Çапла тунипе ђеђђе ђирне йури йертпĕ çынсем вара вăл ђире çăмăллăн ђирлесе ирттерсе йанă. Çакăн пек çынсене вара çĕнĕрен ђеђђе ђирĕ те ђасах йерме пултарайманнине те ђылай ĕлĕкех астунă. Çавăнпа та çак тĕрлĕ ĕç ĕлĕкренех Интире, Киттайра, Кĕçĕн Аçире, Африкра тата Капкас таврашĕнђе те пулнă.

Капкасра хĕрарăмсене хаклă тавар вырăнне сутса пурăннă вăхăтра пĕђĕк ђухнех хĕрађисене виçĕ тĕлтен: кăвапа сывăхне, алă тупанне, ура тупанне йĕппе шăтарса ђеђђе пӳрне çыпăçтарса ђеђђе ђирне йертнĕ. Пите йернĕ ђеђђе, питĕн илемне çухатнине кура Капкас хĕрарăмĕсем ађисен илемне сыхлас йĕркепе, ађисен пĕвне-хырăмне ађа урисем патнелле тин сӳнĕ кађака тирĕ ăшне ђĕркесе, ђеђђене ăпă вырăна çеç тухма пулăшнă. Ђеђђепе çавăн пек кĕрешнĕ ĕç кайарахпа Раççейре, Урал таврашĕпе Çĕпĕрте

пурӑнакан вак халӑхсен хушшинђе те пулнӑ.

Ђеђђене ҫакӑн пек кӗрешнине вырӑсла вариолятси, теҫҫӗ.

Ђеђђерсен хӑтӑлас тесе ђеђђене ҫапла ҫынна йертнипе вилекенсем пурӗ те 0,33°/o (1000 ҫынтан 33 ҫын) ҫеҫ, йе унтан та кайарах пулнӑ пулсан та́, ҫапах та ҫав ђеђђе ҫын ҫиђе ҫӑмӑл ђир вырӑнӗнђех пулман, ҫав ђеђђех тата ытти ҫынсем ҫине те йерме пултарнӑ. Тата ђеђђе пӳрне ђеђђеллӗ ђирлӗ ҫынран, унӑн ытти тӗлӗшрен сывлӑхне тӗплӗ пӗлменнине илсе, ђеђђе пӳрӗне ҫав ҫынран сывӑ ҫынна тӗрлӗ ђирӗ те йерме пултарай. Ҫавӑн пек сифилис, тиф, кор тата урӑх та ҫыпӑҫма пултарай. Ҫавӑнпа кайарахпа ђеђђене урӑх майпа кӗрешме пуҫланӑ. Апа вырӑсла вакцинатси, теҫҫӗ.

## Ӗне ђеђђи.

Вакцинатси тесе ҫынӑн ӳђӗтирне ҫийелтен ҫеҫ касса пактерине (микроппа) кӗрешес ӗҫе хатӗрлесе тӑракан институтра хатӗрленӗ пӑру, йе ӗне ђеђђи

пўрне (ăна вырăсла диэтрит теççĕ) йертнине калаççĕ. Ене ҫеҫҫи унăн ҫĕҫе çумĕнҫе курăнат. Ҫеҫҫе ҫирĕ, вăл сарăлнă вăхăтра ĕне сăваканçен кăшт мĕнле те пулсан сураплапнă, йе каснă аллипе çыпăçса, ҫеҫҫепе ҫирлеттернине астунă.

Çавăн пек ҫеҫҫе йерсе ҫирлесе ирттернĕ çынсене çĕнĕрен ҫеҫҫе йермен. Çапла ĕне ҫеҫҫи йертсе ирттерсе йанă çынсене ҫеҫҫе тивменнине ĕлĕкех: Интире, Перура, Мексиккăра, Анклире, Франтсире, Керманире пĕлнĕ. Ене ҫеҫҫине ҫи малтан хăйне йури Коппенкакĕнра Севель йатлă хĕрарăм хăй хĕр ҫухне 1772 çулта ĕне сунă ҫух йертме тăрăшнă. Вăл çак ҫеҫҫе, сурансăр алла йерменнине кура, хăйĕн аллине кăшт çĕçĕ вĕçĕпе касса сăвакан ĕнеп ҫеҫҫе пўрне çав каснă вырăна сĕрсе йертнĕ.

Çапла туни ăна малалла ҫеҫҫе йересрен темиçе çул хушши сыху панă. Çавăн пек ĕççем ытти патшалăхсенҫе те пулнă. Çавăн пек ҫеҫҫепе кĕрешес ĕçе хăйсем туса тăнă Анклири Суттонпа Феостăп 1765 ç. хăйсен ăнăçлă ĕçĕ-

сем çинђен Лонтонри емелçĕсен ушкăнне пĕлтернĕ. Анђах çав Лонтонри тухтăрсен коллекийĕ (канашĕ) вĕсем кăтартнă ĕçе питĕ тĕлĕнмелле ĕç тесе ĕненмен. Ђеђђерен кастарса пăру ђеђђине сĕрсе ђеђђерен хăтăлмаллине кайарахпа çеç ĕненнĕ. Анклире ђеђђепе кĕрешес ĕçе нумай ĕçленĕ. Унта Етварт Шеннĕр тухтăр çак ђеђђепе кĕрешес ĕçе çирĕм çул хушши ĕçлесе унăн тивĕçлĕхне сăнаса пурăннă. Хăй вăл çу уйăхĕн 17-мĕшĕнђе 1749 çулта çуралнă. 1775 çулта вăл Клођестер ферминђе ђеђђепе кĕрешес йĕркере ĕне ђеђђипе ђирленĕ сынсене çĕнĕрен çак ђир тивменнине астунă.

Çу уйăхĕн 14-мĕш кунĕнђе 1796 ç. Шеннер 8 çулхи ађана аллине касса ђеђђен пўрне ĕне суса хăйне йертнĕ çынран илсе сĕрнĕ. Çак ђеђђерен касса çапла сын çумне ĕне ђеђђинђенех пулнă ђеђђене йертни ђи малтан пуçланă ĕç пулса тăнă. Çапла туни малалла ђирлессерен ђăнах хăтарассине тĕплĕ пĕлме вăл çав ађанах ултă ернерен ђеђђе пўр не çавăн пек касса çĕнĕрен сыпăçтарнă. Çак çĕнĕрен сыпăçтарнă ђеђђе пўрĕнђен

ҫав аҧана ҧеҧҫе ҧирӗ тивмен. Ҫав ӗҫ ҧеҧҧерен кастарса ӗне ҧеҧҧи пӳрне сӗрнӗ сын ҧевҧепе ҧирлеменнине тӗплӗ кӑтартат.

1798 ҫулта ҫуркунне ҫав Шеннер тухтӑрах ӗне ҧеҧҧи пӳрне илсе пилӗк ҫулхи Вилйам Симмер йатлӑ аҧа хулне касса ҫав аҧана йертнӗ; вӑл аҧаран тепӗр аҧана, унтан тата тепӗрне пилӗк аҧана ҫитеҧҧен ҧеҧҧерен касна. Ҫак аҧасем ҫине ҫӗнӗрен касса ҧеҧҫе пӳрне йертни ҫав аҧасене ҧирлеттермен. Ҫавӑнтан кайран Шеннер ҧеҧҧепе кӗрешес ӗҫре хӑй сӑнаса пӗлнине кӗнеке ҫырса ытти ҫынсене пӗлтернӗ. Унӑн кӗнекине ҫултаlӑкран нимӗҫҫем хӑйсен ҧӗлхине куҫарнӑ. Кайарахпа Йевроппӑри ытти паллӑ халӑхсен ҧӗлхине те куҫарнӑ. Вырӑсла та вара куҫарнӑ.

### Ҧеҧҧерен кастарасси сарӑлни.

Шеннер кӑтартнине Анклире ҧасах йышӑннӑ. Унта ытти тухтӑрсем те вара ҧеҧҧерен касас ӗҫе сарма тӑрӑшнӑ. Лонтонра ҫынсем валли ҧеҧҫе кастаракан институт та уҫнӑ. Анклирен ҧеҧҫе ка-

сас ӗҫ Йевроппӑри пур патшалӑхсене те сарӑлнӑ. Керманире ҫеҫҫе ҫирӗ сарӑлнине кура йатарлатса кастарма тытӑннӑ. Паваринҫе ҫи малтан ҫеҫҫерен ирӗксӗр кастармалли саккун та кӑларнӑ. Керманинҫен ҫак ӗҫ Франсине куҫнӑ. Франсирен Итталине куҫҫа, унта Сакко тӑрӑшнипе ӑнаҫлӑ ӗҫ пулнӑ. Ҫак ӗҫе Испанинҫе те нумай ӗҫленӗ. Испани вӑл ӗҫе хӑйӗн колонине те сарнӑ.

Ҫеҫҫерен кастарасси Раҫҫейре ҫи малтан 2-мӗш Кӗтерне патша вӑхӑтӗнҫе пуҫланнӑ. Уп синҫен вӑл малтан ҫеҫҫе пӳрне Анклирен илсе килтерсе, тиэтрит хӑрушне сӑнама, ывсӑк айӑнна тӗрмере ларакана кастарнӑ, теҫҫӗ. Вӑл ҫак ҫире ҫӑмӑллӑн иртернине кура, унтан илсе пилӗк сынна йунккӗрсене кастарнӑ. Кайран ҫак йунккӗрсенҫен пӗрин ҫинҫен ҫеҫҫе пӳрне илтерсе, вара хӑйне кастарнӑ.

Кайран хӑйӗн творне пуне те кастарнӑ, теҫҫӗ. Ҫеҫҫерен кастарас ӗҫ Раҫҫейре Кампуртсев кӑтартнипе 1801 султан наллӑн сарӑлма пуҫланӑ. Йупа уйӑхӗн 1-мӗш кунӗнҫе 1801 ҫулта Муххин ху-

шаматлă профессăр Мускаври аҫасене пăхакан ҫуртри Антон Петров йатлă пĕр аҫана ҫеҫҫе пÿрĕпе (лимфăпа*) сĕрнĕ. (Вăл лимфăна патша арăмĕ, Мария Павловна Лоптонран илсе килтернĕ). Ҫак паллă ĕҫ пулнипе малтанхи Антон Петрова патша арăмĕ хушнипе Антон Вактсинов тесе хушаматне улăштарнă. 1805-мĕш ҫулта ҫеҫҫереп кастарма саккун кăларнă. Малтанхи пек ҫеҫҫене ҫынран ҫынна йертмелли йĕркене ҫарнă. Аҫасене пăхакан ҫуртсем Мускавра та, Питĕрте те ҫеҫҫе касмалли тĕп вырансем шутне кĕнĕ. Вĕсене ĕне ҫеҫҫи пÿрне хатĕрлесе ытти хуласене салатма хушнă.

Тата кам ҫеҫҫерен кастарас текенсене пурне те касма хушнă. Ҫеҫҫе ҫирĕнҫен ҫапла ҫеҫҫерен кастарнипе хăтăлнине ҫылайĕшĕ курса тăнă пулсан та, ҫак ĕҫ ҫапах та тĕп халăх хушшине ҫасах сарăлма пултарайман.

Мĕншĕн вăл ҫапла ҫасах сарăлманни тĕрлĕ сăлтавран пулнă: малтанах ăна тĕрлĕ йумăҫҫĕм, пупсем те канҫĕрленĕ;

---

*) Ҫеҫҫе пÿрне урăхла „лимфа“ тесе те калаҫҫĕ.

тата вăл ĕçе ĕçлекенсем хăйсен ĕçне тĕплĕ ĕçлеме пĕлменни те пăсвă. Çавăн пек: 1) лимфăна илесси ансат маррипе лайăх лимфă çитменни, 2) лимфăна йурăхлă сыхласа вырăнтан вырăна мĕнле йамаллине пĕлменни. 3) вăл ĕç ђас ђасах тухтăр ĕçне пĕлмен çынсен аллинђе пулнипе ђеђђе касас ĕçĕн хатĕрне майлама пĕлменнипе те пулнă.

Халĕ çамрăк ĕне пăрусене ђеђђе йерт-се, вĕсенђен ђеђђе пӳрне илсе ăна Пактериолокиђески Институтра тĕрлĕ йурăх-сăр хурткăпшанкăран (микропсенђен) тасатса хатĕрлеççĕ. Ăна вырăсла тиэтрит, теççĕ. Йерекен ђир. ђеђђерен хăтăлас тесен çав пăру ђеђђи пӳрĕнђен хатĕрленĕ тиэтритпа кастармалла. Пĕрре кастарни 5-7 çула, йе ытлараха та ђеђђе ђирне сирсе тăма пултарать.

## Ђеђђе тĕрлĕ патшалăхсене мĕнле сийен кӳнĕ.

Ђеђђе ђирĕпе ĕлĕкренпе кашни патшалăхра темĕн ђул çын шатраланса йулса илемĕсене çухатнă. темĕн ђул çын

вилнĕ. Халĕ те ҫылай ҫĕрте ҫав ҫирпе вилекенсем нумай, пуриҫен ытла Раҫҫейре, хамăр хушăмăрта ҫăвашшем хушшинҫех вилеҫҫĕ. Ун ҫинҫен статтистикка ака мĕнле ҫихвăрсене кăтартаҫ.

**Йевроппăри тĕрлĕ патшалăхсенҫе 1910-1912 ҫ.ҫ. кашни 100 пин ҫын пуҫне ҫеҫҫепе вилнĕ:**

| | | | |
|---|---|---|---|
| Раҫҫейре | 37.9 | Анклипе / Уэлҫра | 0,07 |
| Итталире | 12 | Австрире | 0.06 |
| Испанире | 10,5 | Керманире | 0,05 |
| Пелҫкире | 0.9 | Калантире | 0,00 |
| Франтсире | 0.4 | Норвекире | .... |
| Швейтсаринҫе | 0,1 | | |

С.С.Р.С. сывлăх ĕҫне туса тăракан Халăх кăмиссарийаҫĕн статтистикка пайĕ кăтартнипе 1923 ҫ. ҫеҫҫепе ак мĕн ҫул ҫирленĕ:

| | | |
|---|---|---|
| Йевроппăри Раҫҫейре | 31.434 | ҫын |
| Капкасра | 2.200 | ,, |
| Ҫĕпĕрти кĕпĕрнесенҫе | 5.919 | ,, |
| Пурйат-Монкол респупл | 578 | ,, |
| Айакри Хĕвелтухăҫ респупл | 721 | ,, |
| Вăтам Аҫире | 1.727 | ,, |

Шыв транспортĕнҫе . . . . . 416 ҫын
Ҫукун ҫулсем ҫинҫе . . . . . 1.717 „
Тĕрмесенҫе . . . . . . . . . . . . . 15 „

Мĕнпурĕ 1923 ҫ. С.С.Р.С. Украйнăпа Пелоруҫҫи респуплĕксемсĕр 44.757 ҫын.

Ҫав статтистикка кăтартнипех ҫак шутран пирĕн кўрĕп: кĕпĕрне. оплăҫ, респупликкăсенҫе 1923 ҫулта ака мĕн ҫухлĕ ҫирленĕ:

Ҫĕмпĕр кĕпĕрнинҫе . . . . . . 962 ҫын
Воттак оплăҫĕнҫе . . . 1.133 ҫын
Ҫармăс оплăҫĕнҫе . . . . . 407 „
Тутар респуплик . . . . . . 902 „

Оплăҫри сывлăх пайĕ кăтартнипе Ҫăваш оплăҫĕнҫе ҫеҫҫепе халҫхи ҫулсенҫех ака мĕн ҫул ҫирленĕ:

1921 ҫулта . . . . . . . . . 228 ҫын
1922 „ „ . . . . . . . . . 424 „
1923 „ „ . . . . . . . . 1535 „

1924 ҫулăн пĕр кăрлаҫ уйăхĕнҫе ҫеҫ 208 ҫын ҫирленĕ.

Ҫак ҫихвăрсем 1923 ҫ. Ҫăваш оплăҫĕнҫе хăйпе кўрĕп Ҫĕмпĕр, Воттак, Ҫармăс опл., Тутар рес. капни ăрасна ҫеҫҫепе ҫирленинҫен те ытларах ҫирленĕ ҫихвăрсене кăтартать.

Мускаври сывлăх пайĕнђи, йерекен ђирсемпе кĕрешекен пайĕ пуçлăхĕ тухтăр Спирина пире каласа пĕлтернипе 1919 ç. пĕр Мускавра çеç ђеђђепе 1700 çын вилнĕ.

Ђеђђерен кастарсах тăмалла. Америккăра пурне те ђас ђасах кастарсах тăнипе халĕ ђеђђе ђирĕ пĕрете пулмасť. Унта пĕрчĕр çулра ђеђђе курăнсан та питĕ сайран пĕр иккĕрен ытла курăнмасť те. Вăл та унта йут патшалăхсенђен йертсе пыракансем ђирленипе çеç пулаť. Халĕ Керманинђе те вăл ђир питĕ сайра пулаť; ĕлĕк унта та ђеђђерен пумай вилнĕ.

Статтистиккă кăтартнипе Керманин Пруççинђе капи 100.000 çын пуçне çулран çула ђеђђепе акă мĕн ђул вилнĕ.

| | | |
|---|---|---|
| 1866-мĕш çулта | . . . . . . | 62 çын |
| 1867 ,, | ,, . . . . . . . | 43 ,, |
| 1868 ,, | ,, . . . . . . . | 18 çын |
| 1869 ,, | ,, . . . . . . . | 19 ,, |
| 1870 ,, | ,, . . . . . . . | 18 ,, |
| 1871 ,, | ,, . . . . . . . | 243 ,, |
| 1872 ,, | ,, . . . . . . . | 262 ,, |
| 1873 ,, | ,, . . . . . . . | 36 ,, |

1874-мӗш ҫулта . . . . . . . 10 ҫын

Ҫавӑнтах ҫеҫҫене ирӗксӗр кастармалли саккун кӑларсан:

| | | |
|---|---|---|
| 1875 „ | „ . . . . . . . | 4 „ |
| 1876 „ | „ . . . . . . . | 3 „ |
| 1877 „ | „ . . . . . . . | 1 „ |
| 1878 „ | „ . . . . . . . | 1 „ |
| 1879 „ | „ . . . . . . . | 1 „ |
| 1880 „ | „ . . . . . . . | 3 „ |
| 1881 „ | „ . . . . . . . | 4 „ |
| 1882 „ | „ . . . . . . . | 4 „ |
| 1883 „ | „ . . . . . . . | 2 „ |
| 1884 „ | „ . . . . . . . | 1 „ |
| 1885 „ | „ . . . . . . . | 1 „ |

Ҫеҫҫерен хӑтӑлас тесе, ҫеҫҫерен мӗн тери кастарма кирлине, малалла кастарасси мӗншӗн кирлине кӑпт ҫеҫ тӑна илме пултаракансемпӗн ирӗксӗр каламасӑрах та ҫав ҫыхвӑрсем паллӑ кӑтартасҫӗ. Хӑрушӑ ҫеҫҫе пирӗн хушӑмӑрта ан пултӑр тесен, пуринӗн те—аҫипӑҫинне те, хӑйӗнне те хул кастармалла. Ҫакна пурин те пӗлмелле, пурин те астумалла. Пӗрре касни 5—7 ҫула пынине те астумалла.

## Ђеђђепе ђирлесен килти çыннăн мĕн тумалла?

Малтанах ђирлĕ çынна сывăхри пуђнитсăна илсе кайма тăрăшмалла. Вăл ĕç май килеймесен ђирлĕ çынна килтех канăçлăх памалла. Вăл выртакан пӳлĕмри ђӳређене хĕрлĕ тутăр, йе çитсăпа кармалла. Ђирлĕ çын умĕнђе шăппăн çеç калаçмалла, ăна пĕртте хăратмалла мар.

Ђирлĕ çын вилсен те, сывалсан та вăл выртнă тумтирне, саккине пӳлĕмне теçенфекси*) туса тасатмалла. Ăна пуђнитсăна турттарса кайнă пулсан ђирлĕ çынна илсе кайнă урапине теçенфекси туса тасаттармалла. Теçенфексине мĕнле тумаллине тухтăрсем каласа кăтартнă йĕркепе çеç тумалла.

Ђеђђепе вилнĕ çынна ђуптума йурамаст. Ђирлĕ çыннăн сывлăхне тĕплĕ сыхлас тесен, ăна пуђнитсанах васкаса илсе кайма тăрăшмалла. Ђеђђепе ђирленĕ çынна емелпе тӳрлетмеççĕ, вăхăтĕнђе ђирĕ йăвăрланасинђен тивĕçлĕ сыхлас ĕçе кăна астăваççĕ. Ђеђђепе ђирленĕ çын-

---

*) Теçенфекси тесе ђирђĕр йертекен пактерисенђен емелне тасатнине калаççĕ.

на ҫеҫҫе шатрине хыҫтарма йурамасҭ. Вăл сурана сарни анҫах пулаҭ. Ҫирлĕ ҫын шатрана хыҫҫа, ҫеҫҫе пўрĕнҫи куҫа курăнман хурта йертсе, куҫа сĕрсе ҫеҫҫене унта йертсе куҫҫăр (суккăр) пулма та пултараҭ.

Ҫеҫҫе тўрлене пуҫласан ҫеҫҫе шатрин хупписене хăвăртрах тасатас тесе, хăпăтса пăрахма та йурамасҭ. Ҫапла хăпăтсан, хăпăтнă вырăна лупашка йулса, кайран шатраллă йулма пултараҭ. Ҫеҫҫе шатра сĕвĕнсе хăй хăрса ўкессине ҫирлĕ ҫыннăн тўсĕмлĕ кĕтсе иртермелле. Ҫаксене пурин те тĕплĕ пĕлсе тăмалла. Йалсенҫи канашсен ҫирлĕ ҫынсене вĕсем нумайăн пулсан, пуҫнитсăна йама май килмесен, пурне пĕр ҫурта пухса, унта вĕсене ҫирĕсем иртсе кайаҫҫен выртарса, тивĕҫлĕ пăхтарса усрамалла.

Ҫирлĕ ҫынсене лайăх астуса тăма тавҫăракан ҫынна унта уйăрса, ҫавăн пек ҫынна пăхтарма тăрăшмалла. Ҫаксене пурин те астумалла. 5-6 ҫултан ҫеҫҫерен кашни ҫыннăн хăйне те кастарсах тăмаллине те манмалла мар. Ҫакна пурин те астумалла.